


# Чăваш чĕлхи – пирĕн чĕлхе

## *(Аслă ушкăнри ачасемпе иртгермелли уяв сценарийĕ)*

***О.А. СМИРНОВА**, Комсомольски районĕнчи Комсомольскинчи «Пилеш» 2-мĕш ача сачĕн аслă воспитателĕ,*
***М.Л. МИХЕЕВА**, Комсомольски районĕнчи Комсомольскинчи «Пилеш» 2-мĕш ача сачĕн воспитателĕ*

**Тĕллевсем:** ачасене халăх йăли-йĕркине упрама, тăван чĕлхене юратса вĕренме хавхалантарасси; чĕлхе илемлĕхĕпе пуянлăхне туйма, пĕлӳлĕхе ӳстерме пулăшасси.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:** Чăваш Республикин гербĕпе ялавĕ, чăваш тĕрри, И.Я. Яковлевăн сăн ӳкерчĕкĕ, чăваш кĕнекисен куравĕ.

**Ĕç хатĕрĕсем:** тенкелсем, лаша макечĕ, йывăçсем.

### Уяв юхăмĕ

Зала хаваслă юрăпа ачасем кĕреççĕ.

Ертсе пыракан. Ырă кун пултăр, хаклăран та хаклă хăнасем тата ачасем! Сире эпир паянхи Чăваш чĕлхи кунĕ уявĕнче курма питĕ хавас. Кашни çыннăн хăйĕн тăван чĕлхине вĕренмелле, унпа яланхи пуплевре тата çырура тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Чăваш чĕлхи – чăваш халăхĕн чĕлхи. Унпа пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем, кукаçи-кукамайсем сĕм авалтанах калаçса пурăннă, тăван сăмахăн иксĕлми хăвачĕпе ачи-пăчине ӳстерсе çын тунă. Чăваш чĕлхи кунне уявласси халĕ пур çĕрте те сарăлса пырать. Ку праçник аслă вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлевич Яковлев çуралнă кунĕпе пĕр килет. Иван Яковлевичăн çуралнă кунĕ – ака (апрель) уйăхĕн 25-мĕшĕнче. Вăл чăвашсене çутта кăларнă, чăвашсен çĕнĕ çырулăхне йĕркелесе янă, ачасем валли букварь, нумай кĕнеке пичетлесе кăларнă. И.Я. Яковлев Чĕмпĕр гимназийĕнче, Хусан университетĕнче вĕреннĕ, студент çулĕсенчех Чĕмпĕр чăваш шкулне йĕркелесе янă.

Пĕрремĕш ача.

Тăван халăхна
Ĕмĕрне те ан ман:
Ăсра та, ăшра та
Вăл пултăр ялан!

Ертсе пыракан. Хамăрăн тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ çинчен Василий Давыдов-Анатри какă мĕн калать.

Савар, мухтар чĕлхемĕре,
Ăна усрар чыс-хисепре:
Унпа эпир ĕçе вĕреннĕ,
Чăн тӳпене çити çĕкленнĕ!
Упрар тăван чĕлхемĕре,
Чун-чĕрери хĕлхемĕре!
Унпа эпир ялан çĕнтернĕ,
Çĕр-шыв ятне çӳле çĕкленĕ.

Иккĕмĕш ача.

Вăхăт çитрĕ: чăвашăн чĕлхи тимĕр татрĕ.
Туптар, хăйрар ăна малалла!
Ыранхи çĕн ăста тĕнчене янраттарĕ.
Çамрăксем, вăл сиртен тухмалла!

Виççĕмĕш ача.

Эп – чăваш ачи, саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене.
Юратап юрра-сăвва та,
Купăса та кĕслене.
Юрататăп вуламашкăн
Чăвашла та вырăсла.
Ик чĕлхе вăл – ик ăс маншăн,
Эп пуласшăн ик ăслах.

Ертсе пыракан.

Илемлĕ, илемлĕ, илемлĕ чăваш юрри,
Илемлĕ чăваш юрри те юрлама пĕлсен кăна.

Ачасем «Автан» юрра (сăвви А. Кăлканăн, кĕвви Г. Лисковăн) шăрантараççĕ.

Ачасем *(пурте пĕрле)*. Пире вăрçă кирлĕ мар! Эпир пурте мирлĕ пурнăçшăн тăрăшатпăр.

Тăваттăмĕш ача.

Пире вăрçă кирлĕ мар,
Пире кирлĕ мир!
Ачасем, хастар пулар,
Пĕрлешер эпир.

Ертсе пыракан. Ачасем, çĕр çинчи чи хаклă çын кам-ши вăл?

Ачасем *(пурте пĕрле)*. Анне!

Ертсе пыракан. Тĕрĕс, ачасем. Çĕр çинчи чи хаклă çын – анне.

Пиллĕкмĕш ача.

Пăхрăм та анне çине:
Сар хĕвел пек ун кулли.
Ма тесессĕн ман анне
Çĕр çинче чи илемли.



Улттăмĕш ача.

Анне! Çак ят чи çывăх,
Чи чаплă çĕр çинче.
Пурнать вăл ĕмĕр сывă
Кашни çын чĕринче.

Саккăрмĕш ача.

Атте, анне...
«Чи хаклă ятсене
Ан манăр ĕмĕрне», –
Тет асанне.

Ачасем пурте пĕрле «Пукане» юрра (сăвви А. Тускилĕн, кĕвви Г. Хирпӳн) юрлаççĕ.

Ертсе пыракан. Çăкăр – пирĕн пуянлăх. Ăна яланах перекетлĕ тыткалăр.

Тăххăрмĕш ача.

Хырăм выçмасăр çăкăр ан тыт:
Çăкăртан хакли çук.
Алă çумасăр çăкăр ан тыт:
Çăкăртан таси çук.
Çĕлĕк хывмасăр çăкăр ан тыт:
Çăкăртан асли çук.

Ачасем «Кĕтесле» вăйă выляççĕ.

Ертсе пыракан. Ачасем, сивĕ те хаяр хĕл хыççăн çулталăкăн хăш вăхăчĕ çитет-ши?

Ачасем *(пурте пĕрле)*. Çуркунне!

Ертсе пыракан. Тĕрĕс, ачасем! Акă мĕн çырнă çакăн çинчен Иван Яковлевич Яковлев вĕренекенĕ Константин Иванов «Нарспи» поэмăра.

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
Хĕл ыйхинчен вăратса.

Вуннăмĕш ача.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса.

Пĕрремĕш ача.

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет.
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.

Иккĕмĕш ача.

Юр каяссине кĕтмесĕр
Мăн уçланкă варрине
Хăрамасăр, шикленмесĕр
Çеçпел тухнă ирхине.

«Митюк тухрĕ урама» юрă (сăвви В. Бараевăн, кĕвви В. Воробьевăн).

Виççĕмĕш ача.

Эсĕ манăн тус-юлташ,
Çывăх тăван-хурăнташ.
Çирĕп çунат паратăн,
Çула уçса пыратăн.

Ертсе пыракан.

Илемлĕ, илемлĕ, илемлĕ чăваш ташши,
Илемлĕ чăваш ташши те ташлама пĕлсен кăна.

Ачасен пĕр ушкăнĕ «Тух-ха, Ванюк» юрра (сăвви Н. Васанккан, кĕввине Г. Лисков çырса илсе йĕркеленĕ) юрлать. Çав вăхăтра тепĕр ушкăнĕ ташă ташлать.

Тăваттăмĕш ача.

Йăмăк выртрĕ çывăрма.
Кăнтăрла кирлех канма.
Пысăк ĕç паян вăл тунă.
Кĕпине хăех-çке çунă.

«Качака» юрра (сăвви С. Шавлин, кĕвви А. Токаревăн) шăрантарнă хыççăн ачасем чăваш халăх юмахĕ тăрăх хатĕрленĕ «Лаша шырани» инсценировка лартса параççĕ.

Ертсе пыракан. Чăваш чĕлхине юратăр, ăна упрăр,чăваш пулнипе мăнаçланăр. Паянхи уява эпир çак шухăша çирĕплетекен сăмахсемпе, Альбина Юрату çырнă «Чăваш пулнипе мăнаçлан» сăвăпа, вĕçлетпĕр.